## Kaçар, аннем...

Асран кайми, аннем-хĕвелĕм
Kaçар мана, kaçар мана.
Сан ӳкĕте кĕме пĕлмерĕм,
Кил пăрахса ютра çӳрерĕм
Касар, аннем, kaçар мана.

Асран кайми, аннем-хĕвелĕм,
Kaçар мана, kaçар мана.
Аттем çукран ачаш эп ӳсрĕм,
Мĕн ачаллах килтен эп писрĕм,
Kaçар, аннем, kaçар мана.

Асран кайми, аннем-хĕвелĕм,
Kaçар мана, kaçар мана.
Ютра юрла-юрла çӳрерĕм,
Юррăмсене, тен, илтеймерĕн,
Kaçар, аннем, kaçар мана.

Асран кайми, аннем-хĕвелĕм,
Kaçар, аннем, савсам, аннем.
Юрла-юрла килех эп килтĕм,
Юррăмсене санран эп илтĕм,
Юрлар, аннем, юрлар, аннем.

*Урташ, В. Kaçар, аннем… : [сăвă] / В. Урташ // Урдаш, В. Ĕмĕтĕмĕр çитсе пынăран : сăвăсемпе поэмăсем / В. Урташ. – Шупашкар, 1983. – С. 99-100.*